С(Чув)
К С20
318644чув

# Раиса Сарпи



# КАМ-ШИ ЭПĔ?

Национальная библиотека ЧР
4-031864



Возвратите книгу не позже
обозначенного здесь срока

С(чув)
К С20

Раиса
Сарпи

# КАМ-ШИ ЭПĔ?



*Сăвăсем*

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1989

ББК 84 Чув. 7
С 20



ПРОВЕРЕНО
20 ю

31864-чув

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

С $\frac{4803710202-106}{М\ 136(03)-89}$ 79—89
ISBN 5-7670-0188-X

ББК 84 Чув 7
© Чăваш кĕнеке издательстви, 1989 ç.

I

*Сире вӑлли, ачасем,*
*Шӑллӑмсемпе йӑмӑксем,*
*Ҫыртӑм эпӗ сӑвӑсем.*
*Ак вӗсем.*

Автор

## Ҫуркунне

Пӗлӗт каррине хуллен сирсе
Уҫрӗ кантӑкне хӗвел-пике.
Йӑлтӑр! кулчӗ.
Қарчӑк-хӗл текех
Тӳсеймерӗ, тарчӗ ҫурҫӗре,
Ҫамкине, питне пӗре-пӗре,
Тарчӗ сӑртӑн ҫӗлӗкне илсе.

«Қаялла хӗл памӗ таварса,
Ах, епле ларас-ши ман капла?..»—
Пит хурланчӗ сӑрт, вар-вар туса,
Юхрӗ сив куҫҫуль ҫырманалла.

«Ан хурлан»,—ачашшӑн чуптуса
Типӗтет хӗвел ун куҫҫульне.
Сӑртӑн ҫавракa кукша пуҫне
Ешӗл тутӑр кӗҫ ярать ҫыхса.

## Ейӳ сарӑлсан

Ҫыр хӗрринче ӳсет йӑмра—
Хӑй чӗркуҫҫи таран шывра.

— Тух хăвăртрах, йăмра, шывран,
Шăнса эс чирлĕн çаруран.
Йăмра пăхмасть те каялла.
Тек тайăлать вăл шывалла.
Юлташĕпе вăл ух! та ух!
Кӳлленчĕк урлă сикнĕ чух,
Шуса ӳксе лапра çине,
Варланă пулнă кĕпине,
Ак, халĕ амăш куриччен
Васкать, чӳхет ăна темччен.

## Çуркунне ал парать

Вăрманпа васкамасăр утатăп.
Юр халь сĕлкĕш, путать лăштăрах...
Урара ман резина çут атă:
Çуркунне... çенĕкрех вăл тăрать.

Ыр хăнашăн ярах алăк уçă.
Кил хуçи-çутçанталăк хавас:
— Тĕпеле эс иртсем,— тет пек уççăн,—
Сана пурте кĕтеççĕ.
Хăва
Çепĕç кăчкă çурасшăн.
Хавассăн
Кайăксем çавăрасшăн йăва...

Сивĕ хĕл çеç сывлать ассăн-ассăн,
Куççульпе пит-куçне вăл çăвать.
Иксĕлет ĕнтĕ хĕлĕн вăй-халĕ.
Çуркунне ал парать таврана...

Çуркунне, сансăр тунсăхчĕ.
Халĕ
Тунсăх мар:
Çитрĕн эс хăнана!

## Пĕрремĕш çулçă



«Тĕттĕм, пăчă. Тĕлĕртĕм вăрах,
Йăлăхтарчĕ — уçăр алăка!» —
Шак-шаккарĕ çулçă — кăлăхах.
Пĕтĕм вăйне пухрĕ те вара —

Тапса сирчĕ пир шăналăка.
Симĕс куçне уçрĕ — пĕр кана
Тĕлĕнсе сăнарĕ таврана
Пăсланать тăпра сăрт çиййĕнче,
Шурă юр выртать ту айĕнче...
Вăл иккен вăраннă васкарах,
Тусĕсем çывраççĕ папкарах.

Кăшт майларĕ çулçă кĕпине,
Вăшт! çеç сарчĕ симĕс аркине.
Ларчĕ майлăраххăн вырнаçса,
Пĕтĕм чăтăм-тӳсĕмне пухса,
Тытăнчĕ кĕтме тусĕсене.
Тен, ыран тĕл пулĕ вĕсене...

## Садра

Çурхи хĕвел кунран-кун
Ăшăрах кулать.
Епле чăтса тăрĕ чун, —
Ĕçлеме хушать.

Ĕçлесен вăл — чун уççи,
Пулас мар наян.
Ретĕн-ретĕн улмуççи
Лартрăмăр паян.

«Те Ваççи, — тет, — те Васси, —
Пĕр кайăк сасси —
Ĕçлемесĕр эс ан çи,
Ĕçле-ĕçле çи!»

## Кӳлĕ

Ярăм-ярăм сапрĕ
Хĕвел çут хĕмне.
Кӳлĕ шывĕ çакрĕ
Кĕмĕл теветне.

Лăпкă çил хускатрĕ
Вĕтĕ хумсене.
Тевет çинчен татрĕ
Çутă тенкине.

Вĕлт те вĕлт çухалчĕç
Татнă тенкисем...
Ак, каллех çуталчĕç —
Шыв çинчех вĕсем.

## Чĕмсĕр шыв

Пӳрт çинче пит уççăн, сыввăн
Хавасланчĕ çумăр шывĕ.
Вăл хăех каларĕ шăпăр,
Пĕр ташларĕ тăпăр-тăпăр.
Çĕр çине кĕç сиксе анчĕ —
Сиксе анчĕ те шăпланчĕ.
Пухăнчĕ кӳлленчĕке,
Ĕнтĕ юрламасть текех.
— Эс кама капла кӳрентĕн,
Мĕн пирки халь чĕмсĕрлентĕн?
— Лекрĕм мар-и тыткăна... —
Терĕ шăппăн вăл мана.
Тытрăм пĕчĕк кĕреçе,
Тытăнтăм хĕрсех ĕçе.

Уçрăм эпĕ анлă çул —
Шыв ал сулчĕ: чипер юл!
Тавтапуç! Эс, çул уçса,
Питĕ пулăшрăн мана.
Шăнкăр-шăнкăр юрласа,
Шывваскарĕ çырмана.

## Туслăх хурăнĕ



Тапса тăран çăлкуç патне
Хĕвеллĕ ăшă ирпеле
Виç тантăш, туслăхăн ятне,
Шур хурăн лартнăччĕ пĕрле.

Ăш çил лăпканă ир çинче
Шур хурăнăн яштак пĕвне.
Вăл ӳснĕ çулăн айккинче,
Сыхланă туслăх тĕввине.

Анчах пĕр путсĕр, нишлĕ чун —
Алли епле çĕкленнĕ ун! —
Хуçса хăварнă унăнне
Черченкĕ, çепĕç вуллине.

Çав йăрăс хурăн кăлăхах
Пулайрĕ ирсĕр чун кулли...
Анчах хуçаймĕ туслăха
Нихçан нимле тăшман алли.

Тапса тăран çăлкуç патне
Хĕвеллĕ ăшă ирпеле
Виç тантăш, туслăхăн ятне,
Çĕн хурăн лартрĕç халь пĕрле.

## Ӳкерчӗк

Ҫӗнӗ пӳрт ӳкертӗм,
Турӑм мӑрйине.
Тухрӗ сар хӗвел те
Янкӑр тӳпене.

Пӗлӗтсем шап-шурӑ,
Пысӑк мӗлкисем...
Хумлӑ-хумлӑ тырӑ—
Анлӑ уйӗсем.

Яштака шур хурӑн
Лартрӑм ҫӑл умне.
Сад ӳкерсе хутӑм
Чӳрече умне.

Татӑк хут анчахчӗ
Тин ҫеҫ ман умра.
Пурнӑҫ сӑн-сӑпачӗ
Чӗрӗлчӗ унра.

## Пӑла

Пӑла—тӑрна куҫ евӗр тӑрӑ,
Ҫашни тумламӗ чӑн ахах.
Шӑнкӑртатса шанкав чул тӑрӑх
Таҫта васкать вӑл яланах.

Юхать, юхать,—ниме пӑхмасть вӑл,—
Вӑй пуҫтарса малтан мала.
Сӗве ҫырми ӑна пит хапӑл
Илсе тухать мӑн Атӑла.

Юхать мӑнаҫ Ҫӗршывӑм тӑрӑх
Хӑватлӑ Атӑлӑм-атте.
Пӑлам, пӗчӗк пулсан та тӑрӑш,
Ҫекле мӑн Атӑл хӑватне.

## Шӑна кӑмпи

—Хӗрлӗ шӗлепке ман пуҫӑмра,
Пӑчӑр-пӑчӑр шурӑ пӗрчӗсемлӗ...

Ма иртсе каятăр ман çумран?
Хăвăртрах мана татса илсемĕр.
Эпĕ хитререх ыттисенчен!
Пăхăр: шĕлепкем епле илемлĕ!—
Курнăçса пăхать тĕм айĕнчен
Йĕрăс çеç шăна кăмпи хĕлхемлĕн.
Васкамастăп эп ăна татма—
Наркăмăшлă иккенне пĕлетĕп.
Урана çĕклерĕм те тапма—
Чăштăр-чăштăр тунине илтетĕп,
Çаврăнса пăхатăп васкаса,
Шанк хытса каятăп хăраса:
Умăмра тăрать вăрман патши—
Мăйракаллă пит хитре пăши.
—Тăхтасам, ан ват эс кăмпана,—
Сĕлтрĕ вăл мăйракипе мана.
—Сирпĕтес пулать тапса ăна:
Çак кăмпа вăл—наркăмăш кăна.
Пит хитре, чăнах та, вăл пăхма,
Çĕлен евĕр хатĕр-çке сăхма,—
Терĕм эпĕ, ак, паттăрланса,
Пăширен хăранине манса.
—Иккĕн эпĕр пулас çук тăшман.
Эс пĕлмен иккен-ха, тусăм ман:
Чирлесессĕн, вăрманти чĕрчун
Сипленет çисе çак кăмпана.
Савнă ачама та вăл пĕркун
Çăлчĕ вилĕмрен.
Тавах ăна!
Тĕлĕнсе, пит тимлĕн эп итлерĕм
Пăши тус хама каланине.
Нихăçан та ватмăп эпĕ терĕм
Тĕл пулсан шăна кăмписене.





## Пирĕн умра

Пирĕн умри урамра
Явăнса ӳсет йăмра.
Ма салхуллăн каçсерен
Вăл пăхать чӳречерен?
Сивĕрех-ши çил çинче?
Тен, хăрать вăл пĕр-пĕччен?
Лартрăм эпĕ çуркунне
Çамрăк хурăн ун çумне.
Ӳсчĕр иккĕш юнашар,
Юлташпа чух тунсăх мар.

## Çырлара

Аслă вăрман уçрĕ
Ешĕл каррине.
Ман сукмакăм чупрĕ
Чăтлăх варрине.

Çут хĕвелĕ шелсĕр
Ăшшине тăкать.
Сулхăн, тӳсеймесĕр,
Тĕм хыçне тарать.

Вăрман имĕ-симĕ—
Хĕп-хĕрлĕ çырла.
Тутлă, ырă çимĕç
Пирĕн тавралла.

Ăшă, ырă куншăн
Савăнать чĕре.
Кунтăк хыççăн кунтăк
Тулчĕ ĕшнере.

## Тинĕс

Ав, куç тулли тĕлĕнмелле илемлĕх!
Тӳпе таса. Хĕвел кулли çиçет.
Ман шухăш-кăмăл тинĕсе иленчĕ,
Кăвак тĕнче чĕнет инçе-инçе.

Халь тинĕс çийĕ тĕкĕр евĕр тикĕс,
Шăрçа сапать унта хĕвел шевли...
Хăш чух кăвак, хăш чух вăл тĕксĕм симĕс...
Çил çĕкленсен, ун капланать çилли.

Асать, урать вăл чарăнма пĕлмесĕр,
Хура сăртсем пек инçетрен килсе,
Пĕрне-пĕри хуса иртсе, вĕç-хĕрсĕр
Килсе çапаççĕ çырана хумсем...

## Дельфин

Аннепеле иксĕмĕр
Тинĕс хĕрне килтĕмĕр.
Ах, кунта мĕн чухлĕ çын!
Çывăхрах ишет дельфин.
— Питĕ ăслă çак чĕрчун,
Çăлнă ачана пĕркун,—
Илтрĕм те каланине
Ишрĕм эпĕ ун патне.

Хăрамарĕ вăл манран,
Слива илчĕ аллăмран,
Сулкаларĕ хӳрипе,
Утлантарчĕ хăй çине.
Пăшăлтатрăм темĕнччен
Дельфина эп хăлхинчен.
Кăшт пĕлтертĕм хам çинчен,
Чăвашри туссем çинчен:
— Анлă Атăл çийĕнче,
Шупашкар çывăхĕнче

Пысăк тинĕс кĕç пулать,
Хура тинĕс пек тулать.
Килĕшетĕн эс мана,
Пыр, дельфинăм, хăнана.
Шупашкар тинĕсĕнче
Сикĕпĕр хумсем çинче.
Ку дельфин мана ăнланчĕ,
Шыв çинче вăрах вылянчĕ.
Вăл пуçне тайса тав турĕ:
Пырăп терĕ, юрĕ, юрĕ!

## Ирхине

Пĕлĕте-утияла
Хĕвел сирчĕ урипе.
Тутлăн карăнчĕ,
Яла

Сăнаса куç хĕррипе.
Пуринчен те чи малтан
Сикрĕ тăчĕ сар автан,
Çунат çапса авăтать,
Чăхха-чĕппе вăратать.
Мунчан пĕчĕк мăрйинчен
Тĕтĕм сăрхăнать çинçен.
Шыв çĕклет Васук мучи,
Ќĕç тутланĕ ун мунчи,
Чупрĕ тухрĕ Ќулине,
Янраттарчĕ куллине.
Хĕветӳк, Ќуçук, Укçук
Мĕн пирки-ши халь те çук?
Хĕвел пăхрĕ кантăкран:
Çывăраççĕ çак таран.
Çавăнпа тулта халь çук
Хĕветӳк, Ќуçук, Укçук.
Хĕвел тăсрĕ аллине,
Аллине—çут шевлине,
Ќăтăклать хăлхисене,
Хăвалать ыйхисене:
— Тăрăр, тăрăр, тусăмсем,
Тăрăр, ыйхă чăптисем!
Тухăр, тухăр урама—
Выляма!



## Микуç



— Эй, Микуç, кала, мĕн-ма
Эс паян питне çуман?
— Виçĕмкун çеç мунчара
Çăвăнтăм-çке-ха, ара...

## Анна

— Мĕн пулнă, анне, сана?
Кунсерен пĕчĕкленен,—
Ыйтрĕ хĕрпĕрчи Анна,
Амăшĕпе виçĕнсен.

— Çук, пĕчĕкленместĕп-иç,—
Терĕ амăшĕ Натиç,—
Эсĕ, хĕрĕм, кунсерен
Хăвăртах иккен ӳсен.

## Асанне

Пĕррехинче каçхине
Ыра чунлă асанне
Уçрĕ те шур арчине
Чĕнчĕ мана хăй патне.

Кĕмĕл тевет, мăй çыххи,
Калпак, сурпан, пиçиххи,
Хĕрлĕ сатин кĕпесем,
Сарă хитре саппунсем,
Çут калушпа шур чăлха,
Пурçăн тутăр, ик çăмха...—
Çаксене йăлт асанне
Пачĕ мана—мăнукне.

Çак пурлăха тăрăшса
Усратăп-ха унăнне.
Спектакльте час-часах
Эп пулатăп «асанне».

## Мечĕк

Тăппи-таппи-тап-тап!
Хытăрах мана эс çап!
Çавăрса çĕре пăрах,—
Пулăп эп хаваслăрах.

Тăппи-таппи-тап-тап!
Меллĕрех мана эс çап!
Хĕнесен те эс мана,
Кӳренместĕп эп сана.

Тăппи-таппи-тап-тап!
Эп сикмешкĕн юратап.
Эх, çитесчĕ пĕлĕте!
Пурнăçласчĕ ĕмĕте!..

Тăппи-таппи-тап-тап!
Тыт мана!
Атту тарап!..

## Улай

Çырмара вылянă чух
Тупрăм эпĕ йыт çури.
Пĕчĕкскер, сывлатчĕ чух—
Хуçăлнă кайри ури.
Йăтса кайрăм эп ăна
Хăвăртрах больницăна.
— Йыт çурин тяппи «ап-ап»,
Çыхса яр, Анюк аппа...
Эмел сĕртĕм кашни кун.
Кĕç сывалчĕ йыт çури,—
Сыпăнчĕ кайри ури.
Халĕ акă пыр та кур—
Мĕнлерех Улай маттур!
Кил-çурта сыхлать тата
Хураллать хăех сада.
Çывăха ямасть юта.
Микула—кула-кула
Сахăрпа, ав, илĕртет:
— Ман алран та илĕ...—тет.

Шарламасть те ман Улай,
Вĕркелет кăна лăй-лăй.
Хăй мана куçран пăхать—
Пĕлтерет пек йыт çури:
— Намăс тени ман çук-и?
Эп манмастăп туслăха,
Хам-хам-хам!



## Хуралçă

Пĕчĕкçеççĕ мамăк чĕпĕ-чăмăрсем
Пĕр чăмаççĕ, пĕр ишеççĕ ăмăртса.
Эп ларатăп çыранта пăхкаласа,
Шăхличпе хаваслă кĕвĕ каласа.

Ав, çӳлте хура хĕренĕ явăнать,
Халь чăмас пек, шăтарас пек вăл сăнать.
Шут тытать пуль: «Çаклатас пĕрерĕшне...»
Ан хăйратăр, çăткăн, кукăр сăмсине.

— Пĕчĕкçеççĕ сарă мамăк чăмăрсем,
Шиксĕр выльăр, чăмăр-ишĕр, чăмпăртсем.
Эп пур чух ыр курăр ирĕк кӳлĕре,
Ыррăн-сыввăнах çитерĕп килĕре.

## Хыр

Хыр ӳсет çул айккинче,
Сарă тулă пуссинче.
Гимнастерка—çийĕнче,
Туртса çыхнă пилĕкне.

Пĕччен хыр—яштак салтак,
Ир те каç вăл хуралта,
Хӳтĕлет хир шăплăхне,
Тинкерет вăл таврана...

Пограничник пиччене
Асилтерчĕ вăл мана.

## Така

— Эй, така, шап-шур така,
Эс ăçта ирех танккан?
Чарăн ĕнтĕ, ан васка,
Ҫил, ларар, кунтах каска...
Ҫаврăнса пăхмасть така,
Малаллах утать-танккать:
Тап-тап-тап!
Тап-тап-тап!
— Эй, така, шап-шур така,
Сан ик пысăк мăйрака,
Ҫустăрма пек çаврака,
Парнеле пĕрне мана.
Ҫурăк парăп эп сана.
Мăйраку—шăп кустăрма,
Питĕ меллĕ кустарма.
Иккĕшне те эс парсан,
Ҫăмăлăм тулатчĕ ман.
Тăвăп пĕчĕк самокат,
Ярăнтарăп йăмăка...
Тап-тап-тап!
Тап-тап!
Тăп!
Чарăнчĕ васкаканскер,
Хуравларĕ, ак, мĕскер:
— Парнелĕттĕм те сана,
Ҫирлĕ мăйракам мана:
Сыхламашкăн тăвана,
Хăратмашкăн тăшмана.
Ҫустăрма пек мăйракам
Хирĕç тăма хăйĕ кам?..



## Утăра

Ҫуç йăмăхать пăхсассăн,
Вĕççĕр чăпар çаран—
Ҫĕр пин чечеклĕ, аслă,
Ҫурăк—хăлха таран.

Вăхăт ăна çулмашкăн,
Ҫилчĕ ялйыш хăпса.
Ҫăмăлăм çук юлмашкăн—
Тăмăп пĕччен пăхса.

31264-сув
Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

Çил вĕркелет кас-кассăн,
Сарă хĕвел çиçет,
Хĕмĕ ташлать хавассăн
Хурçă çава çинче.

Харăс çулаççĕ, тикĕс.
Пурте ĕçре сатур.
Кĕç ешĕл-симĕс тинĕс
Пулĕ ылтăн сăрт-ту.

## Ватă çăка

Çил-тăвăл тулхăрса, ахăрашса
Чышкисемпе шаккать ман кантăка.
Салхуллăн халь ларать пуçне усса
Çурт умĕнче çаралнă ват çăка.

Ăна шеллетĕп эпĕ чĕререн,
Илсе кĕресчĕ ăшă пÿлĕме.
Çук, хăрамасть вăл тулăксăр çилрен:
Чăтать çăка — ман патăма кĕмест.

## Қам-ши эпĕ?

Анне мана чĕппĕм тет.
Атте ашкăнчăк эс тет.
Асаннеçĕм ĕнчĕ тет.
Аппа хура курак тет.
Шăллăм витлет: упăте!
Инке путенеçĕм тет.
Кÿршĕри Терен тете
Тыла пуçри тăрна тет.
Эп тăратăп аптраса,
Қам-ши эпĕ чăнласа?..



## Маçтăр

Юратмастăп мухтанмашкăн,
Пурпĕрех сире калам:
– Çак Верук ытла ăста-çке,–
Теççĕ ман пирки ялан.
Ма тесессĕн хам майлатăп
Пукане валли çипуç—
Хам виçетĕп, хам касатăп,
Хам çĕлетĕп, хам çыхатăп.
Шукăль хĕр пулать Çинук,
Мĕн кăна-ши унăн çук...
Йăмăка та шăллăма
Уяв кунĕ тăхăнма
Питĕ капăр кĕпесем
Парăп-халĕ çĕлесе.

## Ташлать Илемпи...

Тулта сивĕ çил каш-кашлать.
Пӳртре Илемпи таш ташлать.
Пăхать кантăкран сивĕ çил,
Пăхать-тĕлĕнет сивĕ çил:
Ташлать Илемпи, ташлать,
Шăвать вăл, ишет акăшла.
Хулне вылятать кĕвĕ май,
Пуçне вĕлт! ухать шунă май.
Алне Илемпи вăшт! сулать,
Ташланă май йăл-йăл кулать
Е вырăнтах вĕл! çаврăнать,
Сиксе, тăпăрт-тăпăрт тăвать.
Ташлать Илемпи, ташлать:
Сăмси те, ури те ташлать,
Çанни те, арки те ташлать...
Пăхать, чăтаймасть сивĕ çил.
Пуçлать ташлама шухă çил.
Хăй шăпăр калать, хăй ташлать,
Ташланă май каш-каш кашлать.
Тулта сивĕ çил каш-кашлать,
Пӳртре Илемпи таш ташлать.

Ташлать Илемпи. Ташлать!
Ташланă май йăл-йăл кулать.
Ӳссен вăл артистка пулать.
Ташлать Илемпи, ташлать...
...Ташлать сивĕ çил, ташлать...
Халтан кайрĕ: хаш! хашлатать,
Пуçне усрĕ, сулчĕ алне,
Ҫанма выртрĕ кив сак айне...
Ташлать Илемпи, ташлать!..

## Пучахсем

Пухса кĕртрĕç тырă-пулă.
Пучахсем хирте кăшт юлнă.
Татăлса йĕрет пучах:
«Тăлăх юлтăмăр пачах,—
Лӳшкетме кĕç пуçлĕ çумăр...»

— Эй, тăрар-и çума-çумăн,
Ачасем, хире тухар-и?
Пучахсем эпир пухар-и?

Хутаç хыççăн хутаç тулчĕ—
Сар хĕвел саламлăн кулчĕ,
Йăл çиçсе, пире тав турĕ.
Мĕншĕн тетĕр?
Ҫалăп, юрĕ:
Сарă-сарă пĕрчĕсем—
Сар хĕвелĕн ачисем—
Ĕнтĕ халĕ макăрмаççĕ—
Ашă пӳлĕмре выртаççĕ.



## Уй-хир пушаннă



Уй-хир пушаннă. Вăл капла—
Ман шăллăм пуçĕ пек шакла...
Комбайн-машинка тăрăшсах
Уй-хир çӳçне—сар ыраша—
Çаратнă кайнă тĕппипех,
Хăварнă çыр хĕрне тĕпек.

## Кушак, питне çу

Ларатăп кантăк умĕнче—
Чуна ытла кичем манне.
Йăлт тĕттĕмленчĕ çут тĕнче,—
Пӳртрен тухма чарать анне.
Тулта тăман, çил ахăрать—
Аннем эп чирлесрен хăрать.
Кушак çурин пĕр хуйхă çук.
Мăр-мăр ыйха туртать кăна.
Кушакăм, тăр та питне çу—
Тус-тантăш килтĕр хăнана.

## Чапайла выляни

Малалла пĕр шиксĕр вĕç эс,
Урхамахăм-çилçунат!
Аллăмра çиçет çут хĕçĕм,
Çĕнтерӳшĕн чун çунать.

Тăшмана эпир нихçан та
Парăнман, парăнас çук!
Урхамахăм-çилçунатăм,
Тăшмана тапта та çул!

Юнашар Чапай хастаррӑн
Ыткӑнать тӑшман ҫине.
Шуррисен эшкерӗ тарчӗ...
Ирӗкре Ҫӗршыв-анне!

## Пӗччен мар

Тӗлӗрет тӑван ял шӑплӑхра,
Ҫурт-йӗрсем, йывӑҫсем ыйхӑра.

Уйӑх ҫеҫ тӳпере мӗн ирччен
Сапалать таврана ҫут мерчен,

Ҫӗрлехи кӑн-кӑвак кантӑка
Кӗмӗллет пайӑркан-пайӑркан.

Пӳлӗмре эпӗ ларатӑп пӗччен
Кӗнеке вуласа чылайччен.

Пӗччен мар, кӗнеке-тусӑмпа
Каласатӑп хӗрӳ чунӑмпа.

## Ҫӗнӗ юр

Хӗл мучийӗ килсе ҫитрӗ
Инҫетрен, Пӑр ҫӗрӗнчен.
Кӑпӑшка юрпа вӑл витрӗ
Таврана, кӗр сисиччен.

Шурӑ ҫӗлӗк тӑхӑнтарнӑн
Курӑнаҫҫӗ юпасем.
Эрешленнӗ, капӑрланнӑ
Таврари пур йывӑҫсем.

Ҫӑм алсишӗ парнеленӗ
Хӗл мучи туратсене.
Кӗмӗлпе йӑлт чӗнтӗрленӗ
Чӳрече куҫӗсене.

## Çĕнĕ çул туйăмĕ

Ачасен ыйхи килмест паян:
Çĕнĕ çулваскать вĕсем патне.
Юрă янăрать халь ян та ян,
Хĕл мучийĕ валеçет парне.

Қапăр елка пӳлĕмре çиçсе
Йăлтăрать тем тĕрлĕ çутăпа.
Çывхарать мирпе телей илсе
Çĕнĕ çул васкавлă утăмпа.

Пилĕк юплĕ çăлтăр хĕм сапать,
Çутатать Çĕн çул килес çула.
Ак сехет вуникĕ хут çапать—
Ал парать кив çул Çĕнĕ çула.

Çĕн çулта çĕн ӳсĕмсем туса
Ӳстерер çĕршывăн хăватне.
Туслăн, харăс, çирĕппĕн утса
Çывхарар-ха ĕмĕтсем патне.

## Хĕвел

Сулчĕ хĕрлĕ тутăрпа
Хĕвеланăç.
Сăрт çинчен çунашкапа
Хĕвел анчĕ.
Пичĕ, çил хыт каснипе,
Қĕренленчĕ.
Ачасем, вăл кайнипе,
Қăшт кӳренчĕç:

— Ан васка-ха эс çапла...
— Эй, ан ятлăр.
Ыран килĕп каялла.
Халь кăшт канăр.

## Тӳпери хунар

Çут хĕвел анса ларсан,
Чаршавне сĕм каç карсан,
Çутăлать çӳлте вăр-вар
Сар хунар.

Кам-ши çакнă тӳпене
Çак асамлă хунара?
Мĕн пирки вăл ирчченех
Çутă кавирсем сарать?

Каç — асамçă Хурапи —
Çакнă тӳпене ăна,
Ыйхă кӳлнĕ урапи
Лекесрен лупашкана.

Каçăн урапи çинче
Тутлă, ырă тĕлĕксем.
Кайрĕç хăнана ирччен
Ачасем патне вĕсем.

Каç хунарĕ тĕлкĕшсе
Çутатать çӳл тӳперен.
Тутлă, ырă тĕлĕксем
Саланаççĕ килсерен.



## Пӳртри «чечек»

Кăвак лаша утланса
Хĕллехи ир таврăнсан,
Каллех эпир туссемпе
Вирхĕнетпĕр ту çинчен.
Чĕпĕтет çил сăмсана...
Куç илмесĕр ăмсанса
Кантăкран сăнать Куçук.
Калăн: çунашки ун çук?

Пур. Выртать мачча ҫинче.
Ĕҫ кунта урăххинче...
Питĕ хăрать шăнасран.
Сыхланать вăл сунасран.
Тухас пулсан урама,

Ик хут кĕрĕк тăхăнать.
Ăҫта унта ярăнма?!
Хускалма май ҫук ăна.
Ах, ытла Кӑҫук черчен,
Ача мар, пӳртри «чечек».

## Тăрнасем

Тăратăп эп алла сулса,
Вăййа-кулла, хама манса:
Ќикаклатса, карталанса,
Ќĕр сывлăшне касса-ҫурса,
Тăрна карти кăнтăралла
Вĕҫет-васкать...
                    Чун хурланать:
Ҫунаттисем ҫине хурса
Илсе каяҫҫĕ ҫуллана...

Эй, тăрнасем, ҫуркуннепе
Вĕҫсе килсемĕр картипе.
Ҫитес ҫĕршывăр сывăх мар,
Инҫе ҫул-йĕрĕр ҫăмăл мар.
Инкексĕр ҫӳреме пиллетĕп,
Калле таврăнасса кĕтетĕп.

## Ҫерҫи

Ярăнмасть халь Атăл ҫийĕн
Шур чарлан—кĕсмен ҫунат.
Тăр-тăр-тăр чĕтрет ҫерҫийĕ—
Чăмăрпах сив хĕл юнать.



Мĕскĕнскер, вăл шăннă, выçă—
Витнĕ юр уя-хире...
Тулă пĕрчисем пĕр ывăç
Сапрăм сырăша ирех.

Сиккелет çерçи хавассăн,
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕвлетет.
«Ҫашни кун çапла пулсассăн,
Сив хĕлрен хăрамăп»,—тет.

— Мĕншĕн-ха каймастăн эсĕ,—
Ыйтрăм эпĕ,—кăнтăра?..
— Пурте кăнтăра вĕçсессĕн—
Ҫичем пулĕ хăвăра...

## Парне

Иртенпех паян Ваçук
Ҫаскалать, шаккать темскер.
Мĕн тăвать-ши? Чăтăм çук—
Ман пĕлес килет çавтер.
Пытăм ыйтрăм эп унран.
— Сан çуралнă кун ыран,—
Хуравларĕ вăл,—курăн,
Читлĕх ку... Парне манран...
— Питĕ, питĕ пысăк тав...
Эс, пиччеçĕм, пит ăста,
Лайăх тунă читлĕхне,
Анчах санăн парнӳне
Йышăнмашкăн кăмăл çук.
Ан кӳрен, пиччем Ваçук.
Ҫайăк-кĕшĕк читлĕхре
Юрă юрлас çук хитре,



Çӳреччĕрех ирĕкре.
Эсĕ читлĕх выранне
Сырăш туса пар мана,
Кĕрпе сапăп ун çине,
Тухса çакăп пахчана.

## Уйăх

Пĕччен уйăх тӳпере
Йăлăхнă çӳре-çӳре.
Манпа туслăн выляма
Шутламан-и вăл анма?

Мăйраки ун, вăрăмран,
Кур, çакланнă туратран.
Йывăç çине хăпарам,
Уйăха эп хăтарам.

## Кĕр касĕ

Кĕр касĕ килсĕр йытă пек
Лăпăстатать ял хушшипе.
Сиксе чĕтрет хăй: йĕп-йĕпе,
Шыв сăрхăнать пит çиййĕпе.

Такам кӳлле, кăшт кулмалла,
Чиксе кăларнă пулмалла.
Сив çилĕ витĕр каснăран
Пырса пăхать вăл кантăкран.

Хӑй хуп-хура та ҫӑмламас.
Никам ямасть-ҫке ӑшӑнма.
Те хурланать, те ҫилленет:
Хӑй лӑпӑс-лӑпӑс силленет.

Ҫап-ҫут тумлам халь ун ҫинчен
Чӑлт! сирпӗнет йӗри-тавра.
«Чӑт-чӑт,—тет кантӑк кӗленчи,—
Ҫуркуннеччен. Кӗтсем ырра».

## Тӗтӗм

Ҫич сехет ҫапах та тӗттӗм,
Кӳршӗ ҫурт курнать аран.
Мӑрьерен тухса шур тӗтӗм
Юпа евӗр хӑпарать.

Мӗскӗн, пӑчӑртаннӑ пӗтӗм.
(Ҫил пулсан—ярас ташша...)
Кӑмака чӗппи—шур тӗтӗм—
Юратать, паллах, ӑшша.

Чӗпӗтет пуль ҫатӑр сивӗ
Хӑлхаран та сӑмсаран.
Нумайрах тӑрсан—тӑм тивӗ,
Хӑвӑртрах ҫӳле тарать.

Пӗлӗтсем ҫине ларасшӑн,
Кӑнтӑра вӗҫсе каясшӑн.

## Автобуспа пынă чух

Кам-ши хăвалать хурăнсене?
Тарăн кĕрт ашса, çул айккипе
Хашкаса чупаççĕ сиккипе
Такăнса ӳкес пек юр çине.
Ма тараççĕ-ха манран вĕсем?
Мĕншĕн сиксе тухнă вăрмантан?
Пĕлтĕм эпĕ, пĕлтĕм мĕншĕнне,
Пĕлтерем сире те сăлтавне:
Шăнтнăран сив хĕл урисене,
Кĕтме тухнă ыр çуркуннене.

## Айăпли кам?..

— Ах, инкек! Ах, инкек!—
Ахлатса çӳрет инке.
Макăрать ват асанне,
Хуйхăрса ларать анне,
Пысăк инкекри пекех,
Вăл чĕтрет çине-çинех.
— Ах, мĕскер-ши пулчĕ?—тет,
Пӳлĕм тăрăх асатте
Уткалать енчен енне.
Пăхкалать тек ман енне.
Тарăхнă та тем пекех—
Тулхăрать атте текех:
—Ачана пăхмастăр,—тет,
Мĕн туса çӳретĕр,—тет...
Мĕн пирки ку пăтăрмах?
Мĕн пирки килте: «Ах, ах»?..
Ӳсĕретĕп эп кăх-ках!

Çавăнпа килте: «Ах, ах!»
Ыратать кашнин чĕри:
— Илемпи çамки вĕри!..
Çитрĕ тухтăр васкаса,
Анна пачĕç каласа:
— Ӳсĕрет кăх-ках, кăх-ках...
Пулăш, тухтăр!.. Ах, ах, ах!..
Ырăскер, тараватскер,
Тухтăр хушрĕ, ак мĕскер:
— Пырĕ шыçнă шăпăрланăн!
Сипленес пулать халь санăн!..
Айăпĕ вара — хамрах!
Юр çисеччĕ урамра.

## Пĕлĕтсем — шур путексем

Шурă-шурă пĕлĕтсем...
Шурă-шурă путексем
Пухăннă вăрман çине
Çулçă чăмлама-çиме.
Кĕтӳçи — шух çил ачи,
Чеескер... Кăшт ырнă-ши?
Выртнă та кăнч хутланса,
Путексем çинчен манса,
Хуп туртать тĕм айĕнче.
Чăпăркки, ав, айккинче.



II

*Сире валли, ачасем,*
*Эп куҫартӑм сӑвӑсем*
*Тӗрлӗ-тӗрлӗ чӗлхерен—*
*Чӗререн.*

Автор

*Юрий* КУШАК

## Аквариум



Ҫиет аквариум пулли.
Ун хырӑмӗ ялан тулли.
Выртатӑп ҫывӑрма—
Ҫиет.
Тӑратӑп ҫывӑрса—
Ҫиет.
Яшка ҫиетӗп—
Вӑл ҫиет.
Каятӑп уҫӑлма—
Ҫиет.
Ҫисе мӗнле вӑл йӑлӑхмасть?
Епле ун хырӑм ҫурӑлмасть?
Пултараймастӑп ӑнланма.
Кунта, тен, йӑнӑш пулӗ...
Мӗн-ма хальччен те вӑл кит мар?
Ҫаплах вӑл пӗчӗк пулӑ.

*Владимир РОМАНОВ*

## Монтер

Монтер ҫӳрет ҫуртран ҫурта.
Ҫуртра ун хыҫҫӑн ҫап-ҫутах.
Хул урлӑ ҫакнӑ сумкине.
Мана пулинччӗ вӑл парне!
Эп ҫӳрӗттӗм ҫуртран ҫурта
Ҫӗн ҫутӑсем ҫута-ҫута.

Монтер мана каларӗ:
— Тусӑм,
Ток пурнӑҫшӑн ытла хӑрушӑ.
Унпа май ҫук ҫав выляма.
Малтан вӗрен-ха вулама...
Мӗскер усси инструментран,
Пуҫра пӗлӳ сан пулмасан?

## Анне уявӗ

Шухӑшларӗ ӑшӗнче
Лади: «Тӑрӑп ирхине.
Мартӑн саккӑрмӗшӗнче
Савӑнтарӑп аннене:
Тӑрӑшсах эп вутӑ ҫурӑп,
Шаршана тирпейлӗн хурӑп,
Ҫӑмака та хӑвӑрт хутӑп,
Урайне те ҫуса тухӑп...»
Ҫуҫне уҫрӗ те...
Ҫап-ҫутӑ.
Пӳремеч—сӗтел ҫинче.

Амăшĕ ирех вут хутнă,
Тап-таса пӳлĕмсенче...
Пирĕн Лади салхуланчĕ,
Питĕ хытă вăл кулянчĕ.
Амăш пăхрĕ ун çине,
Хăвăрт сисрĕ мĕншĕнне.
Кулă çиçрĕ куçĕнче,
Ачашларĕ пуçĕнчен:
— Çирĕп ал-уру сан пур.
Эс ӗçчен те ăслă пулăн.
Пулăшăн ĕçре маттур.
Пӳремеч çиме халь пулăш...

## Аэроçуна

Аэроçуна пит йăрă:
Туссемпе кун каçипе
Вĕçтеретпĕр уй-хир тăрăх,
Ăмăртса хавас çилпе.

Вăр-вăр-вăр! тăвать пропеллер,
Кĕр-кĕр-кĕр! мотор кĕрлет.
Ах, епле пит хăтлă, меллĕ.
Килĕр, ярăнăр пĕрле!

Кĕленче кабина витĕр
Курăнать тĕнче инçе.
Самантрах яла та çитĕн,
Пулăн Атăл хĕрринче.

Пирĕнтен кашни ыйтаççĕ
Ăмсанса та кĕвĕçсе:

— Çилçуна ăçта сутаççĕ?
Эх, çӳресчĕ-çке вĕçсе!..

Çакăн пек калатпăр хирĕç:
— Туянман эпир ăна.
Мастерской шкулта пур пирĕн,
Тунă хамăр çилçуна!

*Ханымана* АЛИБЕЙЛИ

## Хӳмсем



Шухăшлатăп: ку мĕн шавĕ?
Каспи тинĕс сас парать.
Çут хумсенĕн ялтăравĕ
Чунăма уçăлтарать.

Путексем-хумсем çӳреççĕ
Ĕшĕл симĕс улăхра.
Вăштăр çилĕ çĕкленсессĕн,
Юрăпа тулать çыран.

Пит илемлĕ сирĕн сассăр,
Кĕмĕл çĕлĕклĕ хумсем!
Пĕрле юрă пуçласассăн,
Савăкланĕ ман чĕрем.

Ак, çилпе хускалчĕ аркăм:
Хум вăшт! çитрĕ умăма.
Чул çине пырса эп лартăм,
Тăсрăм шăппăн юррăма.

Çил сывларĕ кассăн-кассăн,
Манăн кăмăла кура
Кăшкăрчĕç хумсем хавассăн:
— Эй, юрлар пĕрле, ур-ра!..

## Мăр-мăр кушак

Кашни ир кĕтет мана
Çăмламас кушак çури.
Тĕл пулма калаçнăнах,
Шкул умне тухать юри.

Кашни ир шеп çуланса
Çуллă кукăль вăл çиет,
Тав тăвать мăр-мăрлатса,
«Илсе кил ыран та»,—тет.

— Тĕрĕслев ĕçне паян,
Хăть пĕр хут, ман вырăна
Шутласа парасчĕ сан,—
Тетĕп эпĕ мăр-мăра,
Пусĕнчен шăлса ăна.—
«Пиллĕк» илĕттĕм вара,
Пит тав тăваттăм сана...



*Гульфия ЮНУСОВА*

## Помидор

Помидор, кĕп-кĕренскер,
Çавраскер те мăнăскер,
Вут-хĕм пек тулашĕнчен,
Сив сĕткен—ун ăшĕнче.

Мĕн пирки вăл çапласкер,
Ытарма çук чаплăскер?
Ăна лартнă пĕр ирпе,
Шыв шăварнă çемйипех.

Ӳркенмен çум çумлама,
Тислĕкпе хăналама...
Çавăнпа вăл çапласкер,
Хитрескер те чаплăскер.

## Пĕлĕтсем

— Пĕлĕтсем, эсир пит çămăл,
Шур çунатлă та таса.
Çĕкленет-им сирĕн кăмăл,
Пĕр-пĕрне хăваласан?

— Эпир уссăр вылямастпăр
Пĕр-пĕрне çеç тытмалла.
Уй-хире çитме васкатпăр:
Тырпула шăвармалла.

*Анатолий* КОСТЕЦКИЙ

## Çара уралла хур чĕппи

— Хур чĕппиçĕм, каласам,
Ма тяппу çара-ха сан?
— Ма тесессĕн эп шывра
Юратап ишме, чăмма.
Пушмакпа чăмма вара
Кансĕр, майсăр, лайăх мар.



## Катемпи

— Вупăр мар-иç пирĕн пахчара—
Улăм катемпи сĕнксе ларать.
Çĕтĕк-çатăк тум ун çийĕнче,
Шăтăк, мăн шлепке ун пуçĕнче,—
Çакăн пек калать анне пире
Пĕчĕк шăллăмпа иксĕмĕре.

Ҫам систернĕ-ши мулкачсене
Ҫун пирки?
Вĕсем ҫине-ҫинех
Тек килеҫҫĕ пирĕн пахчана
Тустармашкăн шур купăстана.

* * *

Ҫуян ашшĕ ут ҫулать,
Пĕр сулсан, капан пулать.
Ҫуян амăш уттине
Ҫупалать лавсем ҫине.
Пĕчĕкҫеҫҫĕ ҫурисем,
Ҫатăк-кĕсĕк хӳресем,
Тек кумаҫҫĕ ҫулпала
Метекпе калла-малла:
Турттараҫҫĕ уттине
Васкаса ҫĕн йăвине—
Ҫанлĕ пулĕ, ҫеп-ҫемҫе,
Ан ӳркен кăна ĕҫе.



*Абзий ҪАДЫРОВ*

## Тутăх

Ҫӳп-ҫап купи ҫинче кив кĕреҫе
Тахҫантанпах выртатчĕ тутăхса.
Атте, унпа арык чавас тесе,
Часах хурайрĕ аврине лартса.

Ĕçре каллех çуталчĕ кĕреçе...
Ан ман çак кĕреçе çинчен, юлташ!
Наян ан пул эс, ан тирке ĕçе,
Чунна ан пустăр тутăху таврăш.

## Çил

Умра ем-ешĕл мăн çаран,
Хум хăвалать уç çил кунта.
Чупса çӳретĕп эп çарран,
Хавхаланатăп-çке чунтан.

Çунат-аллăмсене сарса
Тытасшăн эпĕ шух çиле.
Чечексене ытамласа,
Çил кĕç ташлаттарса илет.

Ăçтаваскатăп ухă пек,
Вĕçсе-чупса малтан мала?
Пуç çийĕн ăшă аллипе
Çил хыпăнсах сăрнай калать.

*Владимир ПРИХОДЬКО*

## Ĕне

Мĕкĕрет ĕне хавассăн—
Сывлăхлă, эппин, ĕне.
Мĕкĕрет вăл уçă саслăн,
Аванах туять хăйне:
Ӳсĕрмест, апчхулатмасть—
Чир таврашĕ аптратмасть.

— Эппин, тусăм, уттарар.
Яра пар!
Ӳсет курăк улăхра
Çăп-çăра.
Çăлран парăп тап-таса
Шыв ăсса.
Пăхăп кăмăллăн сана.
Парăн сиплĕ сĕт мана.

*Владимир РОМАНОВ*

## Кăмпара



Таврăнтăм эп кăмпаран—
Туп-тулли ман кунтăк.
Утрăм пит нумай çуран,
Ӳкĕнместĕп куншăн.

Тĕксĕм, нӳрĕ вăрманта
Урасем те шăнчĕç.
Ывăнмарăм эп унта.
Ма тесен—ĕç ăнчĕ.

...Ак, паян çӳл тӳпере
Йăл çиçет хĕвелĕ.
Кăмăл сӳрĕк пурпĕрех,
Çук пекех мехелĕм:

Таврăнтăм эп кăмпаран
Нимĕн тупаймасăр.
Çитрĕм эп киле аран,
Ывăнтăм эп шутсăр.



*Агния БАРТО*

## Ăт епле вăл пулăшать

Таньăн ĕçĕ сахал мар,
Таньăн ĕçĕ пит нумай.
Пулăшрĕ вăл шăллĕне:
Çирĕ унăн канфетне.

Ах, мĕн чухлĕ Таньăн ĕçĕ:
Таня çирĕ,
Таня ĕçрĕ.
Амăшпе пĕрле кăшт ларчĕ,
Асламăш патне уттарчĕ.
Ыйхăларĕ те каларĕ:
— Мана хăвăр салтăнтарăр:
Ывăнтăм. Тăрап аран.
Пулăшăп сире ыран.

## Ҫанаш паракан

Çурхи кун...
Анаткаспа,
Шăхăрса çинçе саспа,
Яш утать пит васкамасăр.
Элекçей вăл, паллашсамăр.
Хăмăр куçлă,
Çӳçĕ çырă.
Хĕвел пек кулса пырать.
Ҫăмăлĕ ытла та ырă:
Ҫашнинех канаш парать.
Сад лартать пĕр шурсухал,
Элекçей иртмест ахаль:
— Тымарне ан амантах,
Типсе хăрĕ лартсанах.
Вут татаççĕ кӳршĕре.
Элекçей унта кĕрет.
Ҫăшкăрать:
— Хаваслăрах!
Ĕçлĕр, ĕçлĕр хăвăртрах!
Ачапча васкать класа—
«Пиллĕксем» илме сĕнет.
Çырăр тет хитре, таса,
Чухлăр тет самант хакне.
Ҫайăк-кĕшĕк фермине
Çитрĕ те ак хĕрсене
Ăс парать вăл:
— Хурсене
Ямалла çерем çине.
Ҫашнинех канаш парать,
Пит хавассăн пăхкалать.
Хăй вара вăл ĕç умне,
Çук, тăмасть-çке ĕмĕрне!

*Шаукат ГАЛИЕВ*

## «Қаланă — тунă»

«Ан пăшăрханăр!
Тăвап хамах!» —
Пуриншĕн те янтă,
Ун хатĕр сăмах.
Шавлать, ырă суннăн:
«Қаланă — тунă».
«Қаланă» — кунтах, ара!
«Тунă» — ăçта вара?

Сăмах-юмахран
Йăлăхрĕç пурте.
Суя ачаран
Пăрăнчĕç пурте.
Сывлать хаш та хаш
Ултавçă юлташ:
«Тӳрленĕп эп...
Қаланă — тунă...»

## Шурă-шурă хир

Хире тухрĕ пĕр этем:
— Мĕн-ха ку?
Юр ӳкнĕ тем?..

— Çеçке çурнă хуратул!
Хурт нăрлать, пухать сар пыл...

## Ăшă çумăр



Пытанмастпăр çумăртан:
Қултармастпăр хамăртан.
Çумăр айĕнче чупатпăр,
Сиккелетпĕр, ал çупатпăр.
Пĕр кулатпăр, пĕр шӳтлетпĕр:
«Тырпулпа пĕрле ӳсетпĕр».

## Пурте хăраҫҫĕ пулсан та...

Ан тив, урамра
Урать шартлама,
Ан тив, ҫил-тăман
Шăлать шур юра,
Ан тив, йăвинчен
Тухмасть йыт ҫури,

Ан тив, ҫул ҫинче
Йĕр ҫук ҫын урин —
Булат пурпĕрех
Садика каять,
Ҫилрен, сивĕрен
Ача хăрамасть.

## Шăнса пăсăлнă машина

Ĕҫлемест, апчхулатать,
Ӳсĕрет машина.
Шавали ăна ятлать:
— Санăн, — тет, — ангина.
Ан ёҫ, ан ёҫ сив бензин:
Пырна лекĕ сивĕ.
Вĕри сĕт ĕҫ, аспирин:
Сипленме эс тивĕҫ.



## ТУПМАЛЛИ

I

Çуркунне . . . . . . . 3
Ейӳ сарăлсан . . . . . —
Çуркунне ал парать . . 4
Пĕрремĕш çулçă . . . . 5
Садра . . . . . . . . —
Кӳлĕ . . . . . . . . 6
Чĕмсĕр шыв . . . . . —
Туслăх хурăнĕ . . . . 7
Ӳкерчĕк . . . . . . . 8
Пăла . . . . . . . . —
Шăна кăмпи . . . . . —
Пирĕн умра . . . . . . 11
Çырлара . . . . . . . —
Тинĕс . . . . . . . . —
Дельфин . . . . . . . 12
Ирхине . . . . . . . . —
Микуç . . . . . . . . 14
Анна . . . . . . . . —
Асанне . . . . . . . . —
Мечĕк . . . . . . . . 15
Улай . . . . . . . . —
Хуралçă . . . . . . . 16
Хыр . . . . . . . . . —
Така . . . . . . . . 17
Утăра . . . . . . . . —
Вата çăка . . . . . . 18
Кам-ши эпĕ? . . . . . —
Маçтăр . . . . . . . 19
Ташлать Илемпи . . . —
Пучахсем . . . . . . . 20
Уй-хир пушаннă . . . 22
Кушак, питне çу . . . —
Чапайла выляни . . . —
Пĕччен мар . . . . . 23
Çĕнĕ юр . . . . . . . —
Çĕнĕ çул туйăмĕ . . . 24
Хĕвел . . . . . . . . —
Тӳпери хунар . . . . 25
Пӳртри «чечек» . . . . —
Тăрнасем . . . . . . . 26
Çерçи . . . . . . . . —
Парне . . . . . . . . 27
Уйăх . . . . . . . . 29
Кĕр каçĕ . . . . . . . —
Тĕтĕм . . . . . . . . 30
Автобуспа пынă чух . . 31
Айăпли кам? . . . . . —
Пĕлĕтсем — шур путексем 32

II


**Юрий Кушак**
Аквариум . . . . . . . 34
**Владимир Романов**
Монтер . . . . . . . 35
Анне уявĕ . . . . . . —
Аэроçуна . . . . . . . 36
**Ханымана Алибейли**
Хумсем . . . . . . . 37
Мăр-мăр кушак . . . . 38
**Гульфия Юнусова**
Помидор . . . . . . . —
Пĕлĕтсем . . . . . . . 39
**Анатолий Костецкий**
Çара уяллă хур чĕппи —
Катемпи . . . . . . . —
«Куян ашшĕ ут çулать...» 40
**Абзий Кадыров**
Тутăх . . . . . . . . —
Çил . . . . . . . . . 41
**Владимир Приходько**
Ĕне . . . . . . . . . —
**Владимир Романов**
Кăмпара . . . . . . . 42
**Агния Барто**
Вăт епле вăл пулăшать! 44
Канаш паракан . . . —
**Шаукат Галиев**
«Каланă — тунă» . . . 45
Шурă-шурă хир . . . —
Ăшă çумăр . . . . . —
Пурте хăраççĕ пулсан та 46
Шăнса пăсăлнă машина —






*Для детей младшего школьного возраста*

**Раиса Васильевна САРБИ**

**А КТО ЖЕ Я?**

Стихи

На чувашском языке

Редактор **В. П. Тимаков.** Художник **В. Я. Арапов.** Художественный редактор **М. Д. Давлятшин.**
Технический редактор **Л. Н. Кондрашкина.** Корректор **Р. П. Кудряшова.**

**ИБ 2249**

Сдано в набор 04.11.88. Подписано к печати 08.08.89. Формат $70 \times 90^1/_{16}$. Бумага офсетная № 1. Гарнитура литературная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 3,51. Усл. кр.-отт. 19,01. Учетно-изд. л. 2,48. Тираж 10000 экз. Заказ № 3676. Изд. № 79. Цена 15 коп.

Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

15 пус



ЧӐВАШ КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ